Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**.
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства.

## Автор: Людмила Николаева

## Книга: Сывлăм ăçтан тупăнать?

## Стихотворение: Анне уявĕ

Пичче арча эрешленĕ,
Аппа ал шăлли тĕрленĕ.
Чечек çыххи – аттере,
Питĕ шăп-çке пӳлĕмре.

Алăк сасси илтĕнет –
Пӳлĕме анне кĕрет.
Вăл паян хитре те капăр –
Пурте тăчĕç йăпăр-япăр.

Аннене парне параççĕ,
Саламлаççĕ, чуптăваççĕ.
Эп çеç айккинче тăратăп –
Парне çук ман, хурланатăп.

Ывăл юратмасть тет пуль –
Шăпăртатрĕ ман куççуль.
Çакна курчĕ те анне
Илчĕ хăйĕн ытамне.

Ачашлать мана пуçран,
Юратса пăхать куçран:
– Сахалрах-ха сан çулу,
Парне пултăр йăл куллу.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.